Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско–юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Карягина Марина Федоровна**

**Книга: Кӑтра хӗвел ҫаврӑнӑш**

# Рассказ: Ҫӳлевӗҫ

Чӑн тӗрӗссипе каласан, Ҫӳлвӗҫ вӑл – Патша ятлӑ кушак аҫи. Мана ӑна пӗлтӗр Хӗл Мучи парнелерӗ. Ҫура ҫеҫчӗ вӑл ун чухне, йӑм хура ҫӑмлӑскер. Кӑкӑрӗ умне пӗчӗк шурӑ саппун ҫакнӑ пек, тяппиcене шурӑ пушмак тӑхӑннӑ тейӗн. Ман ҫине мӑна-а–-ҫлӑн пӑхса мя-у-у! терӗ те патша ывалӗ пуль ку тесе шухӑшларӑм.

Патша тесе пурӑнтӑмӑр та – йӑнӑшрӑмӑр ҫав. Пӗр-ик уйӑхран йӑлт улшӑнса кайрӗ хайхи-майхи – палласа илеймӗн. Ирсерен мана анне мар, кушак аҫи вӑратма пуҫларӗ. Ӗненетӗр-и, ӗненместӗр-и – сехет пӑхма вӗренсе ҫитнӗ ман ӑслӑ Патша. Хӑй вӑл чип-чиперех ҫумра ҫывӑрса выртать, хӳри кӑна сыхӑ хуралҫӑ евӗр, нихҫан та тӗлӗрмест. Кашни кун шӑп та лӑп пӗр вӑхӑтра пикенет утиялӑма сӗтӗрме. Тӑмах тивет. Хӗпӗртенипе хайхискер вирхӗне парать диван еннелле – ҫатӑр-ҫатӑр чӗрмелеме тытӑнать. Йӑлтах ҫӗтсе, тӑпӑлтарса пӗтерчӗ. Анне курсан иксӗмӗре те патак ҫитерет–ха... Юрать аслисем умӗнче кушакӑм ачашран ачаш, йавашран йаваш.

Ку нимех те маар-ха. Тӗк тӑмалӑх мӗ–ӗ–ӗнле чупма тытӑнать пӳрт тӑрӑх, ниепле те тытса чарма ҫук: тӗпӗр-тӗпӗр, тӗпӗр-тӗпӗр… Чарӑлса кайнӑ куҫӗсем вӑрӑ-хурахӑнни пек ялкӑшаҫҫӗ. Ҫулӗ ҫинче мӗн тӗл пулать – пӗтӗмпех сирпӗтсе хӑварать. Пӗр пытармасӑр каласан, ку мана шутсӑр килӗшет. Урай тулли тӳннӗ пукансем, йӑванна чечек кур-шакӗсем, тӗрлӗ ӑпӑр-тапӑр йӑваланса выртни мӗнле ача кӑмӑлне каймӗ?! Кунта темле вӑрттӑн илем пуррине пысӑккисем пӗлмеҫҫӗ. Эпӗ хама тӗнчери чи тӗлӗнтермӗш циркра пӗрремӗш ретре ларнӑ евӗр туятӑп кун пек чухне.

Пурӑна киле пирӗн Патша иртӗхсех кайрӗ темелле. Чӑрсӑрланса-чӑрсӑрланса пычӗ те, минтерсем тӗк вӗҫтерме тытӑнчӗҫ. Анне пӗлсен иксӗмӗре те пеҫерккӗ парать-ха... Юрать-ха Патшам вӗсен умӗнче чӑп-чӑмӑшах ҫӳрет тӗнчере ҫук йӗркеллӗ кушак тейӗн. Ӏҫтан кӑна пулма пӗлет! Хам та тусӑма ӗмӗрне сутас ҫук.

Ку нимех те маар-ха! Уссе пынӑҫем Патша урайӗнче тӗпӗртетнипе ҫырлахми пулчӗ. Туятӑп: мачча тӑрӑх кутӑн тарса чупма вӗренесшӗн. Куҫӗсем ҫӗнтерӳшӗн епле ҫунаҫҫӗ те, мӗнле тытса чараям эп ӑна?

Ыткӑнса пырать те чӳрече патне карри тӑрӑх кӑпӑр–капӑр ҫӳлелле хӑпарса каять, шкап тӑррине ялт сикет те люстра ҫине вар-р-р! вирхӗнет. Эпӗ ун хыҫҫӑн аран-аран куҫа ӗлкӗртсе ларатӑп. Унӑн ҫитӗнӗвӗсемшӗн савӑнса пӑтерме ҫук! Патша пӗр хушӑ люстра ҫинче чуччу ярӑннӑ хушӑра пуҫа сулласа тӗлӗнетӗп:

– Йӑнӑш ят патӑм иккен сана. Патша мар эс – Ҫӳлевӗҫ.

Ҫӳлевӗҫӗм чарсӑррӑн мяу-у! тет те тӑр-рӑс! сикет урайне. Ун хыҫҫӑн... люстра та сикет... Пӗтрӗ пуҫах! Кушакӑм сехри хӑпнипе тӳрех диван айне кӗрсе хӗсӗнчӗ. Эпӗ хӑлхасене икӗ аллӑмпа хупланӑ та савӑнас-ши, кулянас-ши тесе ларатӑп. Чӑл-пар саланнӑ люстра хитрине эпӗ хальччен те курман-мӗн. Ванчӑкӗсем пин тӗспе ялкӑшса выртаҫҫӗ... Шел те, мӗн тӑван? Тинех анне хӑлха чикки ҫитерет ӗнтӗ иксӗмӗре те! Ку ҫухатӑва аттерен те пытарайман...

Аттепе анне ӗҫрен пӗрлех ҫитрӗҫ. Урай тулли йӑлтӑр-ялтӑр илеме курчӗҫ те:

– Ах-х! – терӗҫ пӗр харӑс. – Персе анчӗ ҫав...– тесе хутӑм.

Ватӑлчӗ пуль...

Аттепе анне кулса ячĕç. Вара эпĕ те тăрăшсах кулам пекки турăм. Унтан ванчăка тирпейлĕн пуçтарса кăларса пăрахрăмăр. Анчах çĕмĕрĕлнĕ кантăк пĕрчисем чĕрене тăрăнса юлнăнах туйса çӳретĕп темшĕн... Халĕ те тирсе ыраттарса тăраççĕ. Мĕн тăвам-ши?..

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.